**Кавалсем В. Юрри халĕ те асăмрах**

Манăçми Петĕр Хусанкай 90 çул тултарнине Чăваш Енпе Тутарстанра анлăн паллă турĕç. Унăн вилĕмсĕр сăввисемпе эпĕ те шкулта вĕреннĕ чухнех (1938-1948 çулсенче) паллашнă. Вăрмар районĕнчи Кавал шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вăл вăхăтра Мария Кирилловна Юрьева вĕрентетчĕ. Пĕррехинче вăл класа кивелнĕ сăнӳкерчĕк илсе пынăччĕ, унта М. К. Юрьева упăшкипе Михаил Федорович Юрьевпа Петр Петрович Хусанкая ӳкернĕччĕ. Ăна 1926 çулта Ашхабадра тунă мĕн. Петĕр Хусанкай сăнне çавăн чух пуçласа курнăччĕ. Каярахпа хăйĕнпе темиçе хут тĕл пулнă. Пĕри ĕмĕрлĕхех асра юлчĕ. Çакă Вăрнарта 1959 çулта пулса иртрĕ. Петĕр Хусанкай унта суйлавçăсемпе тĕл пулăва пынăччĕ. Пухура хĕрӳллĕ сăмах каларĕ, суйлавçăсене хăйне депутат пулма кандидата тăратнăшăн тав турĕ. Пуху хыççăн, каçхи апат вăхăтĕнче, Хусанкай юрă шăрантарчĕ:

Ай, пуçана, пуç ыратать, –
Симĕс кайăк пуçран сăхрĕ.
Чарсам, чарсам эс кайăкна.
Ати калать ан кайăр тет,
Нӳхреп калать, ан кайăр тет,
Сире валли татах пур тет.
Апи калать, ай, кайăр тет,
Кăмаки калать, ан кайăр тет,
Сире валли татах пур тет.

Çак юрра унччен эпĕ нихăçан та, никамран та илтменччĕ. В. Давыдов-Анатри поэт та ăна «Хусанкай юрри» тет.

Унтанпа 40 çула яхăн иртрĕ. Апла пулин те Петĕр Хусанкай çак юрра юрлани, унăн сăмахĕсемпе сасси халĕ те асăмрах. Шел, Хусанкай юбилейĕн каçĕнче унăн юррине аса илнине асăрхамарăм.

*Хыпар. – 1997. – 25 ака.*